◙ ÇĔНĔ ПРОЕКТ

# Çемье мастерскойĕ ĕçлеме пуçларĕ

*Вăрмарти хăлăха социаллă пулăшу кӳрекен комплекслă центр çумĕнче «Чĕрĕ кристалл» ятпа Çемье мастерскойĕ уçăлчĕ.*

«Чĕрĕ кристалл» Çемье мастерскойĕн ĕçĕ-хĕлĕ, йĕпе-сапаллă кĕрхи çанталăка пăхмасăрах, ăшă тата творчествăлла лару-тăрура старт илчĕ. Мероприятие округри ача-пăчаллă çемьесем хутшăнчĕç.

Пуханнисен умĕнче саламлă сăмахпа тухса калаçнă май Вăрмарти хăлăха социаллă пулăшу кӳрекен комплекслă центрăн директорĕ Жанна Дмитриева Çемье мастерскойĕн презентацийĕпе паллаштарчĕ, проектăн задачисемпе тĕп енĕсене палăртрĕ.

«Чĕрĕ кристалл» проектăн тĕллевĕ – ача-пăчаллă çемьесене ура çинче çирĕп тăма пулăшас тесе вĕсен потенциалне ӳстересси, ачасемпе ашшĕ-амăшне вăхăта пĕрле ирттерме условисемпе тивĕçтерессi, вĕсен хушшинчи хутшăнусене çирĕплетесси. Çакна пурнăçлама икĕ тĕп направлени пăхса хăварнă – эпоксидлă сăмаларан илемлĕ япаласем хатĕрлесси тата парафинпа ăвăсран çуртасем тăвасси. Çавăн пекех икĕ хушма направлени те пур – «Предпринимательлĕх шкулĕ» тата «Эффективлă ашшĕ-амăшĕн шкулĕ».

«Чĕрĕ кристалл» Çемье мастерскойĕ» проекта йывăр лару-тăрури ачасене пулăшакан Фондăн грантĕпе пурнăçлама май килчĕ. Проекта хутшăнни çемьесем умĕнче çĕнĕ майсене уçма тата пуласлăхра çитĕнӳсем тума пулăшасса шанатпăр», – терĕ Жанна Николаевна.



Вăрмар муниципаллă округĕн администрацийĕн ЗАГС пайĕн начальникĕ, Чăваш Енри хĕрарăмсен Союзĕн Вăрмарти уйрăмĕн председателĕ Валентина Волкова çак пулăмăн пысăк пĕлтерĕшне палăртрĕ. Вăрмар поселокĕнче çемьесене пĕрлĕхре пулса пултарулăх ĕçне хутшăнма май паракан вырăн уçăлнишĕн савăннине каларĕ. Предпринимательлĕхри опычĕпе мероприяти хăнисем Светлана Михайлова (супăнь тăвасси тата супăньрен чечексем тăвасси), Алла Жилова (типĕтнĕ улма-çырларан çыхăсем тăвасси тата гипсран япаласем ăсталасси) паллаштарчĕç. Вĕсен историйĕсем проекта хутшăнакансене хавхалану кӳчĕç. Мероприяти вĕçĕнче хăнасем, ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем мастерскойĕнче ĕçлесе пăхма пултарчĕç: эпоксидлă сăмаларан япаласем ăсталарĕç, çуртасем хатĕрлерĕç.

**Татьяна ГРИГОРЬЕВА,**
**Вăрмарти хăлăха социаллă пулăшу кӳрекен комплекслă центрăн директорĕн заместителĕ**



◙ НАЦИ ПРОЕКЧĔ

РАССЕЙ НАЦИ ПРОЕКЧĔСЕМ

# Çынсен сывлăхне тĕрĕслесех тăраççĕ

«Вăрăм та хастар пурнăç» наци проекчĕн тĕллевĕ – çынсен пурнăç пахалăхне лайăхлатасси тата пурнăс кун-çулне тăсасси. Канашри территорисем хушщинчи медицина центрĕн специалисчĕсем Вăрнар-

тĕпченĕ, çав шутра чĕрепе юн тымарĕсен тата эндокрин тытамĕсен ĕçне те. Кашни çынна терапевт пурнăç йĕркине лайăхлатмалли, тĕрĕс апатланмалли,

вăхăтра тупса палăртма, сывлăха сыхласа хăварассипе тивĕçлĕ ме-